ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ 2012

# Çĕнтерӳ çулĕ

1930 çулхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчен тухать

сайт адресĕ: www.put-pobedy.cap.ru

электронлă адрес: print@vurnar.cap.ru

ВĂРНАР РАЙОН ХАÇАЧĔ • 2012 çул • ака /апрель/ уйăхĕн 25-мĕшĕ • юн кун • 50/105019/ № • Хакĕ ирĕклĕ

## Ĕмĕтре – телей шантаракан çурт

ТИМЛĔХ

**Пиллĕкри Ангелина, тăваттăри Артем, виççĕри Андрей тата пĕррери йĕкĕреш Аленăпа Арина хальлĕхе амăшĕн чун ыратăвне ăнланмаççĕ-ха. Хырăм тутă, кĕпе-йĕм таса та типĕ, теттесем туллиех, юрату, ачашлăх çителĕклĕ... – ачана урăх мĕн кирлĕ? Вĕсене чун пană çамрăк Аньăн вара тепĕр чухне çĕрĕпех куçĕ хупăнмасть: хальлĕхе хăйĕн тăван ашшĕ-амăшĕ патĕнче ăшă кĕтес тупнă-ха вĕсем, ыран вара... – ачасем те ÿсеççĕ, кĕçех салтакран шăллĕ таврăнмалла. Ăнланать, пĕрмаях капла хĕсĕнсе пурăнма май çук...**



2-мĕш стр.

## Вăрманти кану пысăк инкеке ан куçтăр

АСĂРХАНУЛĂХ

**Май праçникĕсем çывхараççĕ. Çынсем çуркуннехи ăшă çанталăк хуçаланнине кура уявсене çут çанталăк ытамĕнче ирттерме юратаççĕ. Çавăнпа та Вăрнарти 27-мĕш пушар чаçĕн, асăрхав ĕçĕ-хĕлĕн районти уйрăмĕн, ВДПО-н районти участокĕн сотрудникĕсем вăрмансенче тата ытти вырăнта çулăмпа тимлĕ пулмалли çинчен асăрхаттараççĕ.**

Çут çанталăк ытамĕнче каннинчен нимĕн те ырри çук, паллах. Анчах çакнашкал канакансем тăван тавралăха сиен кÿни те вăрттăнлăх мар. Сăмахран, вăрманта алхасакан вунă пушартан саккăрăшĕ çынсен айăпĕпе тухать. Çавăнпа та çут çанталăк ырлăхĕпе тирпейлĕ усă курăр, вăрмансене çулăмран хÿтĕлĕр.

Хăрушсăрлăх правилисене пăхăнма йывăр мар, вĕсем питĕ ансат.

Вăрманта ахальтен кăвайт чĕртсе ан çӳрĕр. Лăсăллă çамрăк йывăççем çывăхĕнче, торфлă вырăнта тата пушар тĕлĕшпе хăрушă вăхăтра вăрманта вуçех те çулăм чĕртмелле мар. Вăрманта шăрпăксене, сÿнмен чĕлĕм тĕпĕсене пăрахма, кĕленчесемпе ванчăксене хăварма, курăка çунтарма юрамасть.

Вăрманта кăвайт чĕртрĕр-тĕк, уйрăмах тимлĕ пулăр. Чи пĕлтерĕшли – тĕрĕс вырăн суйласси. Вуткăвара ятарлă вырăнсенче е унччен кăвайт пулнă вырăнта чĕртсен аванрах. Енчен те ун пеккисем çуктăк, тавралла чавса тухăр, çĕнĕ вырăн хатĕрлĕр. Пысăк кăвайт чĕртме кирлĕ мар. Пĕчĕкки те, тĕрĕс йĕркелени, ăшă çителĕклĕ парать. Юнашар пĕве е юхан шыв пуррине тĕрĕслĕр, инкек тухсан шыв илме май пултăр. Ан манăр: кăвайта пăхса тăмасăр хăварма юрамасть.

Вут-кăвара шывсăр хăвăрт сÿнтерес тесен çулăма путлантарса нÿрĕ çĕрпе хупласа хумалла. Çĕре урапа лайăх таптăр, тĕтĕм пачах ан тухтăр. Кăвайт патĕнчен тÿрех пăрахса кайма юрамасть. Ку ансат правилăсене пăхăнни пысăк инкексенчен хăтарĕ, çанталăк пуянлăхне сыхласа хăварма пулăшĕ.

## Ĕç шавĕ татăлмасть

ЯЛ ХУÇАЛĂХĔ



И.Петров.

**Район уй-хирĕ ĕç шавĕпе тулчĕ. Моторсем кĕрлени каçченех илтĕнет. Район администрацийĕн ял хуçалăхĕпе экологи пайĕн пуçлăхĕ Вячеслав Горбунов пĕлтернĕ тăрăх, ака уйăхĕн 24-мĕшĕ тĕлне кĕрхи тырăсене 1216 гектар апатлантарнă. Ку – планăн 21,4 процентĕ.**

Хăй тĕллĕн çÿрекен «Туман-1» опрыскиватель пуртан «Мураты» кооперативра ĕçе чи малтан вĕçленĕ. Çак хăватлă техникăпа усă курса Карл Маркс ячĕллĕ кооперативра та кĕр тыррисене апатлантарса пĕтернĕ. Çĕнĕ йышши опрыскиватель ытти хуçалăхсене те пулăшать: «Знамя» кооператива, «Санары» агрофирмăна... Çак кунсенче техника «Янгорчино» предприятире, Вăрнарти аш-какай комбиначĕн хушма хуçалăхĕнче ĕçлеме пуçлĕ. «Мураты» кооператив пур аграрлă предприятие те пулăшма хатĕр, – терĕ Илья Петров механизатор. – Пысăк ĕçе пурнăçлама тÿр килнĕшĕн савăнатăп».

Районĕпе илсен çак вăхăтра нумай çул ÿсекен курăксене 722 гектар апатлантарнă. Ку вăл планăн 8,7 процентĕ. Вăрнарти аш-какай комбиначĕн хушма хуçалăхĕнче нумай çул ÿсекен курăксене 350 гектар, «Мураты» кооперативра – 200, Карл Маркс хуçалăхра 120 гектар апатлантарнă. Ĕç кăтартăвĕ В.Яковлев тата И.Сергеев фермерсен хуçалăхĕсенче – 20 тата 30 гектар. Карл Маркс ячĕллĕ, «Мураты» кооперативсенче, «Санары» агрофирмăра нумай çул ÿсекен курăксене сÿрелессипе те ĕçлеççĕ.

Ял хуçалăх организацийĕсенче çĕр улми 2615 тонна яровизациленĕ е плана 66 процент пурнăçланă.

Е.ТИКИНЕВА.

### Саламлатпăр!



*Пултаруллă ертÿçе –* ***К.Маркс ячĕллĕ ял хуçалăх кооперативăн пуçлăхне Валерий Филиппович ШУМИЛОВА*** *– 50 çулхи юбилейĕпе пĕтĕм кăмăлтан ăшшăн саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, пархатарлă кун-çул, иксĕлми телей, ĕмĕтсене пурнăçа кĕртме çирĕп сывлăх сунатпăр. Эсир ертсе пыма пуçланăранпа – хуçалăх районта малтисен ретĕнче. Ун аталанăвĕшĕн малашне те ырми-канми тăрăшма пысăк вăй-хăват нихăçан та ан иксĕлтĕр. Ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тума ăнăçу сунатпăр.*

***Юбилей ячĕпе саламлатпăр,***
***Ырлăх-сывлăх сунатпăр.***
***Кил-йышра юрату***
***хуçалантăр.***
***Ăнăçу, килĕшÿ савăнтартăр.***

**К.Маркс ячĕллĕ кооператив коллективĕ.**

**«Çĕнтерӳ çулне» – кашни киле**

**Район хаçатне 2012 çулăн иккĕмĕш çур çулĕ валли илсе тăма почта урлă 199 тенкĕ те 80 пуспа çырăнтараççĕ, редакцие килсе илмелле – 120 тенкĕпе. «Çĕнтерӳ çулĕ» хаçатсăр ан юлăр. Юратнă хаçата çырăнăр, вулăр.**

**ÇАНТАЛĂК**

| Кĕçнерни кун | Эрне кун | Шăмат кун |
|---|---|---|
| 26.4 | 27.4 | 28.4 |
| +20 | +21 | +19 |
| +10 | +11 | +12 |

*«Метеоновости» информаци агентствин информацийĕ тăрăх.*

**Юлашки вăхăтра районта пушарсен шучĕ ÿсрĕ. Çавăнпа та пурне те тимлĕхе вăйлатма, çулăмпа асăрхануллă пулма ыйтатпăр. Килхуçалăхра пушар хăрушсăрлăх правилисене çирĕп пăхăнăр.**

**Пулăшу телефонĕсем: 01, 2-50-01, 112.**

# Ĕмĕтре – телей шантаракан ҫурт

(Вĕҫĕ. Пуҫл. 1 стр.)

Паллах, хăйĕн шăпи ҫапла килсе тухасса Отиккăвăра пурăнакан Анна Одинцова шутлама та пултарайман. Ҫамрăкла, 25-рех, пилĕк ача амăшĕ пулни мар, хĕвел айĕнчи телейшĕн пĕтĕм вăйран кĕрешме тивни, анчах та ҫак кĕрешӳ усă кӳменни кулянтарать.

Ҫемьери килĕшӳлĕх пирки кам ĕмĕтленмест-ха? Аня та, хут уйăрттарса пурăнман пулин те, Валерăпа ĕмĕрлĕх пĕр чашăкран пурăнасса ĕненнĕ. Юратурах ĕнтĕ Ангелина ҫуралнă. Анчах та тĕпренчĕкĕпе савăнас вырăнне арҫын чунне усал вырнаҫнă тейĕн. Ҫуттипе анранăскер, ҫамрăк арăмĕ ҫине алă ҫĕклеме те именмен иккен. «Артемпа ҫире чухне вара вакка та тĕкрĕ...» – хăрушă тĕлĕкре пулсан татахчĕ хăть, анчах Аньăн аса илĕвĕ чуна ҫӳҫентерет. Ҫак пулăм хăй витĕмне кӳнĕ-ши – арҫын ача ҫут тĕнчене сывлăхĕ тĕлĕшĕнчен айăплăрах килнĕ. Виҫĕ ҫула яхăн час-часах тытса пăрахать ăна, уйăхра темиҫе хутчен те тĕрĕслев витĕр тухма тивет. Кунашкал ачана инвалидноҫ памалла пек, анчах та Аня, Шупашкарти тухтăрсен сăмахĕсемпе каланă тăрăх, «уйăхра 4–5 хутчен тытамак ерсен кăна инвалидноҫа кăлараҫҫĕ» иккен... «Юрать, эмелне тӳлевсĕр параҫҫĕ», – тет вăл.

Аня каланă тăрăх, Артем ҫуралнă хыҫҫăн та урма чарăнман Валерий, аллисене час-часах ирĕке янă. Хĕрне нушалантарса пурăнтарас мар тесе ашшĕ-амăшĕ Аньăна Кĕҫĕн Кипекрен тăван килне илсе таврăннă. Пурнăҫ тăвас тесех ĕнтĕ Аня амăшĕн капиталĕпе ялĕнче йывăҫ ҫурт туяннă. Пилĕк теҫеткене кармашакан «мĕскĕн» пӳрте кĕҫех сăн кĕнĕ: ҫамрăк хĕр ăна урам енчен сăрланă, шалта хăтлăх кĕртнĕ, ачисемпе унта пурăнма куҫнă.

Ҫак вăхăтра Вăрнарти пĕр каччăпа паллашни унăн хуҫалнă чунне вăхăтлăх сипленĕ темелле. Ангелинăпа Артема та ашшĕ кирлĕ – ҫамрăксем пĕрле пурăнма тытăннă. Андрей ҫуралнă, Аленăпа Арина ҫут тĕнчене килнĕ. Пурнăҫ тума ĕмĕтленекен Аньăшăн ҫемье телейĕ тĕп вырăнта тăнă. Шел, Дима та унăн шанăҫне тӳрре кăларман, яваплăхран хăранă-ши – вăл та кăҫалхи январьте йышлă ҫемьене пăрахса кайнă.

Чи кирлĕ вăхăтра. Ав, пӳрчĕ-ҫурчĕ тĕплĕ юсав ыйтнă, зал, кухня, сывăрмалли пӳлĕм пĕрле 20 тăваткал метртан пысăках мар. Ăшă пулсан кунта та хĕсĕнсе пурăнма пулĕ-ха, анчах та ҫил вылякан пӳртре кăмака хутнин усси ҫук. Хуралтисем пĕтĕмпе йăтăннă.

Халĕ тин пĕччен амăшĕн пӳрт-ҫуртне юсама хал та, укҫа-тенки те ҫитмест. Унăн пĕр «ҫăлăнăҫ» – патшалăхăн пилĕк е ытларах ачаллă ҫемьесене ҫурт-йĕр ҫавăрма пулăшакан программăна хутшăнни. Аня вырăнти ял поселенине документсене тăратнă ĕнтĕ. Анчах ҫамрăк хĕрарăма вĕсем хальлĕхе малалла «куҫманни» пăшăрхантарать.

Ачисемпе телейлĕ амăшĕн ĕмĕчĕсем пысăк: кивви ҫумĕнче ҫĕнĕ ҫурт ҫĕкленсен Аня выльăх-чĕрлĕх йышлă ĕрчетесшĕн. Ҫĕр участокĕ пысăк, унта икĕ ҫул ĕнтĕ пахча-ҫимĕҫ тухăҫлă туса илеҫҫĕ. Сад пахчинче пылак пан улми йывăҫсисем ҫитĕнеҫҫĕ, чиесем нумай. Вырăнĕ – лăпкă, илемлĕ: шăпах ачисене выляса ӳсме аван...

Одинцовсем-аслисем килĕнче хаваслă ача сассине хăнăхнă ĕнтĕ, хĕрне хăйсен мăнукĕсене воспитани пама пулăшма тивет. Мĕн тăвăн, вырăнти ача садĕнче пушă вырăн ҫук пулсан? «Шутлама та хăрушă. Атте-анне ăнланман пулсан кам куҫĕнчен пăхăттăм-ши? Вĕсен хӳттинче пурăнма лайăх, анчах ачасене хăйсен кĕтесĕ кирлĕ. Ҫĕнĕ ҫурт пире ҫĕнĕ пурнăҫа ҫул уҫĕ, телей парнелĕ. Анчах хăҫан кĕтсе илĕпĕр-ши?..» – йывăр шухăшне пытармарĕ пĕччен амăшĕ.

**С.ЧИКМЯКОВА.**

## ПАЯН – ЧĂВАШ ЧĔЛХИН КУНĔ



Чăваш чĕлхин кунне Чăваш Республикин Аслă Совечĕн Президиумĕн йышăнăвĕпе 1992 ҫултанпа чăвашсене ҫутта кăларнă, чăвашсен ҫĕнĕ ҫырулăхне йĕркелесе янă И.Я.Яковлев ҫуралнă кун – ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче – паллă тăваҫҫĕ. Ку эрнере районти шкулсенче чăваш чĕлхи кунĕсем, ытти мероприятисем иртеҫҫĕ.

## *Поздравляем!*



Совет землячества вурнарцев «Туслăх» от всей души поздравляет **достойного сына земли вурнарской, уроженца деревни Буртасы, боевого офицера Галкина Вячеслава Михайловича** с 55-летием и желает доброго здоровья, удачи и счастливого долголетия.

*Анисимов И.А., Васильев С.И., Казакова Т.В., Кошкин В.П., Кузнецов Ю.П., Львов С.Н., Михайлов В.И., Михайлов Ю.Х., Николаев В.К., Николаев Н.Н., Павлов Ю.С., Петров В.П., Прокопьев И.П., Скворцова Г.М., Смирнова В.В., Степанов Ю.С., Тянгов Л.Я., Федоров В.Е. и другие.*

# Вăхăтра явап тыттармалла

## Апрелĕн 26-мĕшĕ – ăс-хакăл пурлăхĕн хӳтĕлевĕн Пĕтĕм тĕнчери кунĕ

**Раҫҫее Пĕтĕм тĕнчери Суту-илӳ организацине кĕме ирĕк парас умĕн акă анăҫри ҫĕршывсем ăс-хакăл харпăрлăхĕн объекчĕсен хӳтĕлевне вăйлатма ҫирĕп ыйтаҫҫĕ. Ҫавăнпа та ку кăткăс ыйту паян питĕ актуаллă шутланать. РФ Следстви Комитечĕн Чăваш Республикинчи следстви управленийĕн Ҫĕмĕрлери следстви пайĕн ертӳҫи Александр ШАРИН хăй ертсе пыракан коллектив ку ушкăнри преступленисемпе мĕнле кĕрешни пирки каласа пачĕ.**

*– Александр Владимирович, ăс-хакăл харпăрлăхĕн прависене пăснипе ҫыхăннă мĕнле уголовлă ĕҫсем пуҫарнă? Ку тĕслĕхсемпе мĕнле мерăсем йышăннă?*

– Ытларах пирĕн следовательсен автор прависене саккунсăр майпа усă курнă, произведенисемпе фонограммăсен контрафактлă экземплярĕсене туяннă, упранă, кӳрсе килнĕ тĕслĕхсемпе пуҫарнă уголовлă ĕҫсене тишкерме тивет.

Пĕлтĕр Ҫĕмĕрлери икĕ уйрăм предпринимателе официаллă проката тухман фильмсемлĕ контрафактлă дисксем сутнăшăн, ку произведенисен «хуҫисене» тăкак кӳнĕшĕн уголовлă явап тыттарнă. Ҫакнашкал пуяс текенсене РФ Уголовлă кодексĕпе килĕшӳллĕн ирĕкрен хăтарма та пултараҫҫĕ.

Предприниматель ĕҫ-хĕлне йĕркелесе пыма кирлĕ программа тивĕҫтерĕвĕсен официаллă версийĕсене туянма укҫа «хытакансем» те нумай. Акă Улатăрти предпринимательсем «1С:Предприятие» лицензилемен программăна (право хуҫи – «1С» акционерсен хупă обществи) Интернетран илнĕ те хăйсен ноутбукĕ ҫине вырнаҫтарнă, унпа бухгалтери документацине хатĕрлеме усă курнă. «1С» обществăна кӳнĕ тăкак вуншар тата ҫĕршер пин тенкĕпе танлашать. Ҫакнашкал уголовлă ĕҫсене Улатăрти тата Ҫĕмĕрлери уйрăм предпринимательсем тĕлĕшпе те темиҫе пуҫарнă.

*– Александр Владимирович, ăс-хакăл харпăрлăхне ҫаратакан «пиратсем» нумайланни мĕнрен килет?*

– Чи малтанах, ăс-хакăл харпăрлăхĕн прависене пăсакансене ҫирĕп явап тыттарасси право хуҫисен хастарлăхĕнчен, йĕрке хуралĕн органĕсене вăхăтра пĕлтернинчен нумай килет. Анчах вĕсем темшĕн хăйсене тăкак кӳрекенсене айăплама васкамаҫҫĕ. Кунсăр пуҫне ку преступленисене обществăшăн хăрушă мар тесе шутлаҫҫĕ. Ҫавăнпа та автор прависене пăсакансене чăннипех те ирĕкрен хăтарнă тĕслĕхсем шутлă кăна.

## *Саламлатпăр!*



Юратнă мăшăра, аттене, асаттене, кукаҫине – **Пăваялĕнче пурăнакан Степан Иванович КУДРЯВЦЕВА** – 80 ҫулхи юбилейпе ҫепĕҫҫĕн ҫупăрласа чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Ҫут тĕнче илемĕпе савăнса пурăнма вăрăм ĕмĕр, ҫирĕп сывлăх, иксĕлми телей сунатпăр. Ҫавăн пекех эпир аннене те иртнĕ ҫуралнă кун ячĕпе чĕререн саламлатпăр. Пире ҫуратса пăхса ӳстернĕшĕн, пурнăҫ ҫулĕ ҫине тăратнăшăн эпир вĕсене пысăк тав сăмахĕ калатпăр.

**Эсир пирĕншĕн пĕртен пĕрре**<br>
**Ҫак пысăк, ҫутă тĕнчере.**<br>
**Ҫĕре ҫити пуҫа тайса**<br>
**Калар пурте саламласа:**<br>
**100 ҫул пурнсамăр ыр курса.**

***Мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем, ҫывăх тăванĕсем.***



Хаклăран та хаклă, юратнă аннене, кукамая, асаннене – **Хирпуҫĕнче пурăнакан Тамара Николаевна ИВАНОВАНА** – 70 ҫулхи юбилей ячĕпе пĕтĕм чун-чĕререн юратса, хĕрӳллĕн ыталаса, чи ҫепĕҫ сăмахсем каласа саламлатпăр. Ырă кăмăлĕшĕн, уҫă чунĕшĕн, тараватлăхĕшĕн, пирĕншĕн лайăх тĕслĕх, шанчăклă тĕрек пулнăшăн ҫĕре ҫити пуҫ таятпăр, тав тунă май, ҫак сăмахсене калатпăр:

**Пул телейлĕ те хаваслă,**<br>
**Турă патăр сывлăхне.**<br>
**Ырă, ăшă, тараватлă**<br>
**Чунупа савсам пире.**

***Ывăлĕсем, хĕрĕсем, кинĕсем, мăнукĕсем, кĕҫĕн мăнукĕсем.***

Хаклăран та хаклă ҫыннăмăра, савнă мăшăра, юратнă аттене – **Ҫавалкас ялĕнче пурăнакан Валерий Филиппович ШУМИЛОВА** – 50 ҫулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн тухакан ăшă, ҫепĕҫ сăмахсемпе саламлатпăр. Кулленхи ҫăмăл мар ĕҫӳнте яланах ҫитĕнӳсем пулччăр. 100 ҫула ҫитиччен юман пек ҫирĕп сывлăх, вăрăм кун-ҫул, иксĕлми телей сунатпăр. Сĕтелӳ ҫăкăр-тăварпа, кĕрекӳ тăванусемпе пуян пулччăр. Тавах сана, аттемĕр, пире юратса, ачашласа, тĕрĕс-тĕкел ҫитĕнтернĕшĕн. Эсĕ пирĕн шанчăк, тĕрек, ҫутă хĕвел.

**Ял ҫинче хисеплĕ ҫын эс,**<br>
**Ачусемшĕн ыр атте.**<br>
**Тăванусемшĕн чи хакли эс,**<br>
**Пурăн 100 ҫул ҫĕр ҫинче.**

***Мăшăрĕпе хĕрĕ, 2 ывăлĕ.***



Ҫак кунсенче пирĕн юратнă аппан – **Пăваялĕнче пурăнакан Надежда Анатольевна АНДРЕЕВАН** – апрелĕн 27-мĕшĕнче 45 ҫулхи юбилейĕ. Эпир ăна чун-чĕререн хисеплесе, юратса саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, вăрăм ĕмĕр, телей, юрату, ĕҫре пысăк ҫитĕнӳ, чăваш сурпанĕ пек вăрăм кун-ҫул, хĕвел пек хĕрӳллĕ юрату, юман пек ҫирĕп сывлăх сунатпăр, яланах йăл-кулă ҫиҫтĕр унăн сăнĕнче.

**Кил-йышра, халăхра**<br>
**чыслă-сумлă эс пул!**<br>
**Чун-чĕре саламне итлесе ҫепĕҫ пул!**<br>
**Упраса ӳстерсем юрату пучахне,**<br>
**Ан сӳнтер нихăҫан кил-ҫемье**<br>
**вучахне.**

***Саламласа, йăмăкĕсем, шăллĕсем тата амăшĕ.***

Ырă кăмăллă та шанчăклă ҫынна – **Пăртасра ҫуралса ӳснĕ, халĕ Шупашкарта пурăнакан Вячеслав Михайлович ГАЛКИНА** – 55 ҫул тултарнă ятпа чун-чĕререн тухакан чи ăшă та ҫепĕҫ сăмахсемпе хĕрӳллĕн саламлатпăр, пурнăҫ ҫулĕ тăрăх малалла та ҫĕнтерӳллĕн утма юман пек ҫирĕп сывлăх, ҫăл куҫ пек тапса тăракан вăй-хал, ҫĕкленӳллĕ кăмăл-туйăм сунатпăр. Пирĕн мухтавлă ентеш милици подполковникĕ хăйĕн пурнăҫне йĕрке хуралĕпе ҫыхăнтарнă, хамăр республикăри Шалти ĕҫсен министерствин ҫул-йĕрпе патруль службин уйрăм батальонĕн командирĕ пулнă.

**Икĕ пиллĕк юнашар тăмашкăн**<br>
**Сан пата та вăхăт ҫитрĕ-ҫке.**<br>
**Ҫак ятпа ыйтатпăр йышăнмашкăн**<br>
**Пирĕнтен чечен кăна ҫеҫке...**

***Юлташĕсем, пĕрле вĕренекенĕсем, кӳршисем.***

# Ялти хисеплĕ ҫын

Ҫĕр ҫине килекен кашни ҫын хисепе тивĕҫлĕ тетпĕр. Анчах та хисепе никам та валеҫмест, укҫа парса илме те ҫук ăна. Хисепе тивĕҫлĕ пулас тесен пурнăҫ йĕркисене ҫирĕп пăхăнмалла.

Пирĕн вара паян чăннипех те хисеплĕ ҫын пирки сăмах пуҫарас килет. Вăл – пирĕн юратнă анне, тăхăр ача амăшĕ – **Ҫĕн Кипек ялĕнче пурăнакан Елизавета Степановна СТЕПАНОВА**. Пирĕншĕн вăл – шанчăклă тус та, тĕттĕм каҫри ҫул маякĕ те.

Елизавета Степановна Степанова 1932 ҫулхи ака уйăхĕн 22-мĕшĕнче Ҫĕн Кипек ялĕнче ҫуралнă. Ҫав ял каччипе – Петр Никандрович Никандровпа пĕрлешсе тăхăр ача ҫуратса ӳстернĕ. Пурнăҫ ҫулĕ ҫăмăл пулман аннен: вăрҫă ҫулĕсенче ашшĕсĕр тăрса юлнă, выҫăллă-тутăллă пурăннипе ял-ял тăрăх ыйткаласа ҫӳренĕ, ҫамрăклах мăшăрĕ ҫĕре кĕнĕ, хăйĕн тăхăр тĕпренчĕкĕнчен иккĕшне ҫухатнă.

Йăлтах чăтнă, тӳснĕ ҫак ачаш та черченкĕ, ҫав вăхăтрах вăйлă хĕрарăм. Хăйĕн асапне вăл ҫынпа калаҫса, ырă ĕҫ туса иртерсе янă. Ахальтен-и, ял халăхĕ паянхи кун та унран усăллă канаш ыйтма пырать. Камăн выльăхĕ чирленĕ, камăн ачи темшĕн макăрать, камăн тата ал-ури сурать – пурте ун патне пырса пулăшу ыйтаҫҫĕ. Пирĕн анне вара вĕсене май килнĕ таран пулăшма тăрăшать. Тепĕр чухне хăшĕ-пĕри ятарласа унпа чуна уҫса калаҫса ларма та пыраҫҫĕ. Пурне те тарават вăл, пуринпе те пĕр чĕлхе тупма пĕлет.

Эпир, ачисем, хамăрăн аннепе чăннипех мухтанатпăр. Анне пире пурне те тарăн пĕлӳ пама тăрăшнă. Хăй ҫиес турама пире ҫитернĕ, пурнăҫăн аслă ҫулĕ ҫине тăратса ҫав ҫулпа ҫирĕппĕн утма вĕрентнĕ. Ахальтен мар пулĕ, пилĕк хĕрĕ аслă пĕлӳ илсе вĕрентекенсем пулса тĕрлĕ шкулсенче ĕҫлеҫҫĕ, ывăлĕсем стройкăра вăй хураҫҫĕ.

Эпир хамăрăн аннепе чăннипех те мухтанатпăр. Ун пек ырă та сăпайлă пулма тăрăшатпăр. 80 ҫулхи юбилей ячĕпе саламласа ҫак сăвă йĕркисене аннене халаллатпăр:

**Тавах, аннем, ҫуратнăшăн,**<br>
**Лăпка-лăпка ӳстернĕшĕн.**<br>
**Ҫуратнăшăн, юратнăшăн,**<br>
**Мăшăр ҫунат пилленĕшĕн.**

Аннеҫĕм, татах та малалла пурăнма, ĕҫлеме Турри вăй-хăват патăрччĕ сана.

***Ачисем.***

